Иванов К.В. Хальхи самана: [сăвă] / К.В. Иванов
// Хыпар. – 1998. – 4 ака. – («Хыпар» кĕнеки; № 31/3).

# ХАЛЬХИ САМАНА

*(1908 çулхи октябрĕн 28-мĕшне асăнса)*[1]

Ачаш кăна ачам пур,
Пĕртте хăпа пĕлмерĕ,
Апат çисе ларнă чух
Аран çилĕ килмерĕ.
Çыру пĕлме, çын пулма
Ялти шкула яр-ха, тет.
Çыру пĕлни мĕн тума
Кирлĕ çынна, атте? тет.
Ачам, ачам, ан йĕтет.
Илтес куна ху илтĕн.
Хут вĕреннин уссине
Хут вĕренсен ху пĕлĕн
Çитес çула çитсессĕн,
Пăртак ăс-пуç кĕрсессĕн,
Парăп акă сана та
Ялти шкула ăс пухма.
Турă хушсан, çын пулсан
Курăн Чĕмпĕр хулине.
Ентĕ, ачам, самана
Ĕлĕкхи мар кучухне.

Ĕлĕкчĕ вăл, ĕлĕкчĕ,
Урăх тĕслĕ ĕмĕрччĕ.
Тырă-пулă пиг пулнă,
Тырă акма çĕр пулнă.
Ĕмĕр иртнĕ ĕç çинче,
Ĕç иртсессĕн ĕçкĕре,
Анчах тĕрлĕ хуйхă та
Пайтах пулнă-çке тата
Тухатмăш та тухатать,
Юмăçĕ те хăратать,
Асамăçсем асаççĕ,
Ача-пчана пăсаççĕ.
Вырăссем те вĕсене,
Ырă сунса, верентме
Ачисене илеççĕ,
Ашшамăшне йĕртеççĕ.
Тарăхтарать таркăн та,
Вăрă-хурах та вăрманта
Тĕрлĕ усал-тĕселрен,
Тĕрлĕ усал чирсенчен
Чӳк кулленех тумалла,
Путек-сурăх пусмалла
Куллен-кунах чӳк туни—
Хĕл-çăвĕпех хĕн курни.
Киреметре кĕлли пур,
Хăяматра хывни пур,
Кĕл-туса та килĕшмест,
Киремет те итлемест,
Турăсем те чӳксене
Илми пулчĕç кучухне.
Кунçул пăсăлса кайрĕ,
Куç-пуç аташса кайрĕ.
Те тутара тухас-ха,
Те юталла тарас-ха
Анчах ыр çын тупăнчĕ,
Самани те улшăнчĕ.
Урăх çулпа утрăмăр,
Урăх çĕре тухрăмăр.
Кунсăр пуçне чăвашсем
Мĕн пулĕччĕç халиччен?
Тутаралла тухĕччĕç,
Тутар тĕнне тытĕччĕç,
Е вырăса ерĕччĕç,
Пĕрерĕнех пĕтĕччĕç.
Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Пăлхатнинчен питĕрех

[1] 1908 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнă.

Шухăш ӳкрĕ пуç çине.
Çĕнĕ ĕмĕр мар-ши çав?
Çĕнĕ пурнăç кайрĕ çав!
Пур çĕрте те ялсенче,
Хура халăх хушшинче
Хут вĕренме тытăнчĕç,
Шкулсем нумай уçăлчĕç.
Вĕсен чĕри Чĕмпĕрте,
Аслă чăваш шкулĕнче.
Кĕнекесем çаптарчĕç,
Çын хушшине салатрĕç;
Кĕçке ĕнтĕ куçĕсем
Уçăлаççĕ чăвашсен.
Кĕçке курма пуçларĕç,
Тĕнче кура пуçларĕç.
Çав ĕçсене кам турĕ,
Çак таранччен тăрăшрĕ?
Çак таранччен тарăхса,
Чăвашсемшĕн тăрăшса
Кунçулĕнче курнине,
Шухăшпала шурнине
Кам каласа парĕ-ши?
Кам ырă ят сарĕ-ши?

Эй самана, самана!
Мĕн кăтартăн малалла?
Хальхи кунсем капла-ха,
Килес кунсем мĕнле-ши?
Пурăнатпăр хуллен çеç
Аслă çынсен ăсĕпе.
Вĕсем пире юратса
*Хăй шухăшне хăварса*
Халăх ĕçне тăваççĕ,
Халăх хуйхипе çунаççĕ.
Ырă çынсем ыйтнине,
Кирек кама кирлине
Ялан пĕлсе тăраççĕ,
Юратайса тăваççĕ.
Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ.
Тĕрлĕ çутă тӳмешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн:
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть:
Чĕри шăнса кайнă çав,
Чĕрĕ виле пулнă çав.
Çитменнине çын çине
Çитмен пурнăç çитрĕ çав.
Йывăр кунсем килчĕçĕ,
Выçлăх çулсем çитрĕçĕ.
Çĕрĕ тăвăр, тырă ӳсмест,
Тăранма та çитеймест:
(Выçă çăвар выçлăхне
Кил картине кĕрсенех
Турчăкапа тухас та,
Сухалĕ çине сурас та,
Хăваласах кăларас,
Хапхаранах ăсатас).
Чăтаççĕ-ха чăвашсем,
Вĕçнех çитмен-ха вĕсем.
Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух,
Ĕçсе-çисе ларнă чух,
Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне,
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçăнта куç тулли?